Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N34 (4603) *1998 çулхи март (пуш) уйăхĕн 27-мĕшĕ, юнкун* *Палăртнă хакпа.*

## Çуркунне васкатать

**(Районти канашлуран)**

Уй-хирсенчи çурхи ĕçсем пуçланиччен вăхăт кĕскелсе пырать, вĕсем тĕлне хатĕрленнин шайне илес пулсан вара, халлĕхе лăпланма иртерех-ха. Ытларикун [illegible]ăхсемпе кооперативсен ертӳçисен тата тĕп инженерĕсен пĕрлешӳллĕ канашлăвĕ ăнсăртран иртмерĕ. Канашлăва администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕсем Ю.В.Терентьев тата ял хуçалăхĕпе апатçимĕç управленийĕн начальникĕ Ф.М.Давлетшин хутшăннипе "Сельхозтехника" акционер обществин бази çинче ирттерни пĕлтерĕшлĕччĕ: АО паракан услугăсем хакла ӳкни çинчен нумай калаçаççĕ пулин те, анчах вăл пулăшмасăр техникăна юсама май çукки паллă. Çитменнине, обществăн генеральнăй директорĕ М.Ю.Жемков тухса калаçни те шанăç кӳчĕ. Район ертӳçисем нумай пулăшнипе тата активлă хутшăннипе тракторсем валли питĕ кирлĕ запас пайсем шыраса тупассипе мерăсем йышăннă тата вĕсене юсассипе хальхи вăхăтра пысăк ĕç пырать. Çапах та техникăна уйсенчи ĕçсем тĕлне хатĕрлессинче тĕп йывăрлăх хуçалăхсене хăйсене тивет ĕнтĕ, лару-тăрăва ăнланакан çĕрте вара çаклатса ĕçлекен хатĕрсен кăна мар, тракторсен хатĕрлĕхĕ те аван. Канашлура "Гостехнадзорăн" районти инспекцийĕн начальникĕ Р.С.Сатдаров çакăн çинчен пĕлтерсе, çуркуннене хатĕрленес тĕлĕшпе йĕркеллĕ ĕçлекен хуçалăхсем сахал мар асăнчĕ. Эпир вĕсем çинчен çырнăччĕ ĕнтĕ. Чи кирли вара - хуçалăхсенчен чылайăшĕнче тракторсене хатĕрлесси хут çинче кăна мар, чăннипех лайăхланнă. Анчах эпир каларăмăр ĕнтĕ, лăпланма халлĕхе иртерех-ха. Хăш-пĕр хуçалăхсенче трактор паркĕсенчи техникăн çуррине е тата та сахалрах хатĕрленĕ, кунта кирлĕ запас пайсем пулманнипе тӳрре тухни вырăнсăр. Хăшпĕр хуçалăхсенче юсав ĕçĕсене çĕнĕ çулта кăна тĕплĕн пуçăннă, çавăнпа та халь вĕсене йывăртарах. Ку енĕпе Ю.В.Терентьев механизаторсемпе юсавçăсен ĕçне тухăçлăрах йĕркелемеллине уйрăм палăртрĕ. Чăнах та, пĕр-пĕрин ĕçне тĕрĕслемелли вăхăт çывхарать, ăмăртакан хуçалăхсен лару-тăрăвĕ вара пурин те тĕрлĕрен. Район ертӳçи пурне те пĕр пек тимлĕх уйăрать пулин те. Сăмахран, халь дизель топливин ыйтăвне татса панă, бензин тĕлĕшпе те йывăрлăхсем пулмĕç пек туйăнать. Минераллă удобренисем хатĕрлеме те мĕнпур условисем пулнă. Анчах кунта та çав хуçалăхсемех кайра пыраççĕ. "Агрохимсервис" акционер обществин базине каллех удобренисем илсе килессе кĕтеççĕ, çавăнпа та уй-хире апатлантарма кирлĕ чухлĕ минераллă удобрени хатĕрлесе хăварайман хуçалăхсен çак юлашки майпа усă курма тăрăшмалла. Çав вăхăтрах хуçалăхсен кĕркуннехи-хĕллехи тапхăрта илсе килнĕ удобренисене упрасси çинчен те манмалла мар. Çаплах удобренисене тиекен агрегатсене кирлĕ пек хатĕрлессишĕн тăрăшмалла, вĕсем кирлĕ чухлĕ пулмасан, çĕнĕ механизмсем хатĕрлемелле. Вăрлăх пирки те шухăшламалла, ăна акас умĕн ĕçлесе хатĕрлессине, имçамлассине пысăк тимлĕх уйăрмалла.

Кĕскен каласан, акиччен чылай ĕç пурнăçламалла-ха. Çав вăхăтрах çурхи ейӳ вăхăтĕнче кирлĕ мерăсем йышăнас тĕлĕшпе те çивĕч ыйту тăрать. Çавăнпа та районти чрезвычайлă комиссин ертӳçи Ю.В.Терентьев ку ыйтăва татса парас тĕлĕшпе хуçалăхсен ертӳçисемпе самоуправленин вырăнти Совечĕсем пурте килĕштерсе ĕçлемеллине палăртрĕ, çаплах çынсем пулăшасса шаннине пĕлтерчĕ. Канашлура çаплах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине, уйрăмах сĕт отраслĕне тивекен çивĕч ыйтусене пăхса тухрĕç. Çакна тĕпе хурса ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн начальникĕ Ф.М.Давлетшин сĕт суса илессипе кая юлакан хуçалăхсен шутĕнчен тухайман хуçалăхсен ертӳçисене хытă критиклерĕ, çаплах ку тĕлĕшпе лайăх кăтартусем тума пулăшакан мерăсем çинче чарăнса тăчĕ.

**Ялсенчен пĕлтереççĕ**

## Садовая урам пур...

Хальхи вăхăтри йывăрлăхсене, строительство материалĕсем хаклă пулнине пăхмасăр, ялта пурăнакансем çĕнĕ çуртсем хăпартаççĕ. Андреевка ялĕнче халь 15 çурт тăваççĕ. Пĕрисем никĕсне хываççĕ, теприсем стенисене çĕклеççĕ, виççĕмĕшĕсем вара çĕнĕ çурт уявне хатĕрленеççĕ ĕнтĕ. Çурт тăвакансене хуçалăх транспорт тӳлевсĕрех уйăрса парать, ыттинче ялта пурăнакансем хăйсен вăйне шанаççĕ. Проектсене те хăйсем тĕллĕн суйласа илеççĕ. Çĕнĕ çуртсем вара пурин те пысăк. Хальхи вăхăтра çĕнĕ çурт тăвакансен списокĕнче Николай Капитонов водитель, Юрий Будяшкин учитель, Вячеслав Никитин газовик, выльăх-чĕрлĕх пăхакан Андрей Короткин, ферма заведующийĕ Валерий Инякин тата ыттисем. Кам-тăр çурта 3-4 çул хушши хăпартать, хăшĕ-пĕри вара маларах та ĕлкĕртет. Çĕнĕ çуртсен адресĕсем те тĕрлĕ - Советская, Ленин, Полевая урамĕсем. Андреевка хĕрринчи Садовая урамĕнче, пĕтĕм çурта тенĕ пекех, кирпĕчрен купаланă.

## Ача-пăча садĕнче интереслĕ

Андреевка ялĕнчи шкул çулне çитмен ачасем вырăнти ача-пăча садне иккĕмĕш кил тесе шутлаççĕ.

10-12 ача вырăнне унта кунсерен 22-24 ача çӳрет. Юлашки вăхăтра кунта тата та хăтлăрах: ачасене интереслĕ вăйăсем, тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан çĕнĕ телевизорпа куракан мультфильмсем питĕ килĕшеççĕ. Ача сачĕн заведующийĕ Н.Н.Будяшкинапа унăн пĕчĕк коллективĕ ачасене лайăх пултăр тесе вăйĕсене те, вăхăчĕсене те шеллемесĕр тăрăшаççĕ.

## Кану кунĕ - тунтикун кăна

Якуркел ялĕнче февраль уйăхĕнче "Надежда" патшалăх предприятийĕ уçнă халăха йăла енчен тивĕçтерекен йышăну пункчĕ пурне те килĕшрĕ. Çак тĕллевпе ялти культура çурчĕн пĕрремĕш хутĕнчи пĕр пӳлĕме тĕпрен юсанăччĕ, заведующи пулма Т.Осипована лартнă. Ялта пурăнакансем вырăн таврашĕсем, халатсем, кĕпе-йĕм çумалли порошоксем хапăласах туянаççĕ, хакĕсем вара пасартинчен йӳнерех. Малашне кунта йăла техникине тата телерадиоаппаратура юсакан мастерсем те кулленех килсе çӳрессине планлаççĕ. Ял халăхĕ çакна шанса пурăнать.

Йышăну пункчĕ вырсарникун та ĕçлет.

*** Культура хыпарĕсем**

## Çĕнтерӳçĕсене саламлатпăр!

*Иртнĕ шăматкун Нурлатри культура çуртĕнче "Чун-чĕрере шăпчăк юрлать" ("Запел в душе соловей") фестивалĕн районти турĕ иртрĕ. Районти смотр çĕнтерӳçисем:*

<u>**Чи лайăх юрлакансем (учительсем хушшинче):**</u>

Фирдаус Касымовна **Гарифуллина** (Çĕнĕ Амзяри вăтам шкулта тутар чĕлхипе литературине вĕрентекен), Халида Якуповна **Гильмутдинова** (Кăчăканлăри вăтам шкулти математика учительници), Сергей Михайлович **Ендиряков** (Уксăмлăри вăтам шкулти музыка учителĕ).

<u>**Чи лайăх ташăçăсем:**</u>

Татьяна Владимировна **Борзова** (Нурлатри 2-мĕш номерлĕ вырăс-тутар шкул гимназири хореографи учительници), Залия Салихзяновна **Фасхутдинова** (Киклĕри тутар шкул-гимназире пуçламăш классене вĕрентекен), Амина Насыховна **Лотфуллина** (Ялавăрти вăтам шкулти математика учительници).

<u>**Илемлĕ сăмах ăстаçисем:**</u>

Марина Алексеевна **Лукьянова** (Нурлатри 3-мĕш номерлĕ тутар-вырăс шкул-гимназири вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен), Рамзия Гасымовна **Галиуллина** (Кульбаево-Марасари вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентекен), Миляуша Минахметовна **Камалетдинова** (Çĕнĕ Иглаелĕнчи вăтам шкулти тутар чĕлхипе литературине вĕрентекен).

<u>**Халăх инструменчĕсемпе вылякан ăстаçăсем:**</u>

Ринат Рашидович **Нугманов** (Кульбаево-Марасари вăтам шкулти класс тулашĕнчи тата шкул тулашĕнчи ĕçсене йĕркелекен), Андрей Зиновьевич **Будяшкин** (Андреевкăри вăтам шкулти физкультура учителĕ) - çамрăк гитаристсен ансамблĕн ертӳçи, Ринат Талгатович **Шагиев** (Бикуловăри вăтам шкулти музыка учителĕ) - фольклор ансамблĕн ертӳçи.

<u>**Чи лайăх юрлакансем (вĕренекенсем хушшинче):**</u>

Лейсан **Замалиева** - Нурлатри 2-мĕш номерлĕ вырăс-тутар шкул-гимназире 11-мĕш класра вĕренекен, Лейсан **Мухамметова** - Тури Нурлатри вăтам шкулта 10-мĕш класра вĕренекен, Фирдус **Тямаев** - Анат Нурлатри вăтам шкулта 10-мĕш класра вĕренекен.

## Расима парне илме тивĕç пулнă

**Мартăн 19-21-мĕшĕсенче Çыранçи Чаллă хулинче "Чаллă шăпчăкĕ" республикăри конкурс иртрĕ, унта пирĕн пултарулăх артисчĕсем те хутшăнчĕç. Конкурсра Расима Туктарова ăнăçлă юрларĕ: Чаллăри авторсен юррисене юрланăшăн пирĕн ентеш паллă юрăçăн Салават Фатхутдиновăн ятарлă парнине илме тивĕç пулчĕ.**

Çапла, çак конкурсра вăл лауреат та, дипломат та пулаймарĕ, анчах та ятарлă парне илчĕ, 150 çамрăк юрăçă хушшинче хăйсем тĕллĕн юрлакансем кăна мар, пулас юрăçă- профессионалсем те юрларĕç вĕт. Расимашăн çакă сахал мар ăнăçлăх.

Çак конкурса пирĕн республикăри юрăçăсем кăна мар, çаплах Самартан, Астраханьрен тата Раççейри тутарсем пурăнакан ытти чылай хуласенчен килнĕччĕ. Конкурс виçĕ уйрăмпа тата виçĕ турпа иртрĕ. 16-20 çулсенчисем хушшинче пирĕн Лейсан Замалеевана уйрăмах йывăр пулчĕ. Мĕншĕн тесен конкурса хутшăнакансенчен çуррине яхăн çак уйрăмра юрларĕç. Апла пулин те иккĕмĕш турта хутшăнма тивĕç пулчĕ. Шел пулин те, виççĕмĕш ушкăна лекеймерĕ. Анчах та Альфия Афзалова (жюри составĕнче унпа пĕрле В.Ганеева, С.Фатхутдинов тата ыттисем те пурччĕ), хĕрачана малашне ăнăçлăхсем тăван-ха тесе хавхалантарчĕ.

Р.Туктарова III уйрăмра, 25-рен тытăнса 30 çулччenхи ӳсĕм категорире юрларĕ. Виççĕмĕш юлашки турта - гала-концертра Расима Чаллă авторĕн Ильгиз Закировăн сăвви тăрăх кĕвĕленĕ юрра юрларĕ, çакă Салават Фатхутдинова питĕ килĕшрĕ. Сабит Миннеханов баянистăн сăмахĕсем тăрăх, Нурлатри артистсем фонограммăсăр, хăйсем юрлани те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулчĕ.

"Чаллă шăпчăкĕ" конкурс виççĕмĕш хут иртрĕ. Вĕсенчен кашнинче Ф.Мухамметова çырнă тата Р.Мифтахов кĕвĕленĕ "Чиелĕх" юрра яланах шăрантараççĕ. Хальхинче те конкурса хутшăнакансенчен 20-шĕ хăйĕн репертуарне çак юрра кĕртнĕччĕ. Шел пулин те, çакăншăн нимĕнле парне те пăхса хăварманччĕ.

*Хуçалăхсенче - отчетлă пухусем*

# Шутламалла тата çĕнĕрен хисеплемелле

Хальхи вăхăтри экономикăн йывăр лару-тăрăвĕ пурне те тивет. Ял çыннине вара уйрăмах йывăр. Агропромышленность комплексне реформăлани те - ирĕксĕрленĕ мера, ял хуçалăхĕнчи тавар туса илекене сыхласа хăварма, яла çĕнĕрен сывласа яма пулăшать. Апла пулсан малашлăх лайăх пуласса шанма пулать. Акă хресченсен хуçалăхĕсен "Тĕрнеç" ассоциацийĕнче ĕçлекенсен пĕрлехи пухăвĕнче те шăп кăна çакăн çинчен калаçрĕç. Хуçалăх председателĕ Р.Г.Шайдуллин тунă отчетлă докладра, хуçалăхри специалистсем тухса калаçнинче мĕнпур майсемпе усă курса продукци туса илессине ӳстермелли палăрчĕ, хуçалăхри финанспа экономика лару-тăрăвне çирĕплетнипе пĕрлех ку тĕлĕшпе те сисĕнмелле лайăх результатсем тунă. Тырпул та, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене те пĕлтĕрхинчен чылай ытларах туса илнĕ тата сутнă. Тĕпрен илсен, иртнĕ çул сĕт суса илесси ӳсни 39 процент, аш - 44 процент шутланнă. Хăйĕн историйĕнче пĕрремĕш хут çакăн пек пуян тухăç пухса илсе (тĕрнеçсем гектартан 50 центнер ытла тырпул пухса илнĕ), хуçалăх тырăпа хăйне кăна тивĕçтермен, çаплах патшалăха сутмалли договор обязательствисене чылай ирттерсе пурнăçланă, çав шутра апатлăх тулăпа та, çаплах туллăн çĕнĕ сортне чылай лаптăк çинче ӳстерсе ăна районти чылай хуçалăхсене сутнă. Хуçалăх сахăр кăшманĕ сутмалли задание те ирттерсе пурнăçланă. Тулă сутса тунă тупăшран 761 миллион тенкине ĕç укçи пама тăкакланă, вĕсен тулă тата та юлнă-ха.

Кĕскен каласан, хуçалăх пĕлтĕр кунта ĕçлекенсене, "чĕрĕ" укçа çине куçарса шутласан, виçĕ миллиарда яхăн тенкĕлĕх тырă, выльăх апачĕсем тата ытти продуктсем панă. Тырă тата выльăх апачĕ çителĕклĕ пулни обществăлла выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарма пулăшнă. Ку тĕлĕшпе "Тĕрнеç" хуçалăх халĕ те иртнĕ çулхинчен ытларах сĕт сутакан хуçалăхсем хушшинче пырать, таварлăх сĕтĕн кăтартăвĕ те питĕ пысăк. Сĕт - "чĕрĕ" укçа илмелли тĕп çăлкуç пулнине шута илсен, "Тĕрнеç" хуçалăхăн та укçа пур. Ĕçре малта пыракансен пысăк ушкăнне парнесем пама та укçа тупнă. Пухăва шефа илнĕ "Зузеевнефтепром" предприяти ертӳçи В.А.Николаев та хаклă парнесемпе пынине палăртса хăвармалла.

Çав вăхăтра кăтартусене пĕр енчен çеç пăхни килĕшӳсĕр пулнă пулĕччĕ. Хуçалăх ĕçченĕсем те, пухăва хутшăннă район представителĕсем те - район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев, ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн начальникĕ Ф.М.Давлетшин, халăх депутачĕсен пĕрлештернĕ Совечĕн председателĕн çумĕ А.Н.Ельченков хуçалăха тытса пымалли ĕçĕн йывăрлăхне темиçе хутчен те палăртрĕç. Кăна ăнланма пулать, туса илнĕ продукцин сутакан хакĕпе унăн хăйхаклăхĕ хушшинчи уйрăмлăх питĕ пысăк, вăл вара хуçалăхшăн пачах та усăллă мар. Сăлтавне тухса калаçакансем тĕслĕхсем илсе кăтартса питĕ тĕплĕн ăнлантарчĕç. Техника питĕ кивĕ пулни те, выльăх апачĕ нумай тăкаклани те кăтартусенче палăрать. Производствăпа тӳрремĕнех çыхăнман факторсем те хăйхаклăх çинче курăнаççĕ. Кусем вĕсем çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха тытса тăма тухакан тăкаксем. Ытти хуçалăхсемпе танлаштарсан, Тĕрнеçре вăл пысăк. Хуçалăх çак йывăрлăхран хăтăлма май тупмасан, тăкаксем тата та ӳсĕç. Апла пулин те, хăйхаклăх пысăк пулнин сăлтавĕ вăл продукцие туса илме тăкаксем нумай кăларни, вĕсене чакармасăр малалла утăм тума çук. Ертӳçĕсемпе специалистсем кăна мар, кашни ĕçчен çакна лайăх ăнланса тимлĕх уйăрмасан лару-тăру лайăх енне улшăнмĕ. Ку тĕлĕшпе пухăва хутшăннисем Ф.М.Давлетшин тухса калаçнине кăмăллăн итлерĕç. Вăл çак хуçалăх ĕçченсене тăкаксене чакармалли çул-йĕрсем çинчен тĕплĕ те ăнланмалла каласа пачĕ. Пĕр фермăри ĕнесене кăкармасăр усрамалли меслетпе пăхма пуçласан тăкаксене хирĕç технологин уссине вĕсем хăйсемех курчĕç. Сысна ĕрчетес ĕçре натурăпа тӳлессипе усă курни те хăйне тӳрре кăларчĕ. Хуçалăх ĕçченĕсем çак опытпа малашне анлăрах усă курма шутлаççĕ. Чи кирли вара, вĕсем ĕçе йĕркелессинче улшăнусем туса, кооперативсене пĕрлешсе вăй хума хатĕр пулни.

**Р.ГИЛЬМУТДИНОВ.**

# Столовăйри канăçсăр ĕçсем...

***Питĕ пысăк материсен тĕлĕшĕнчен - янăрамасть. Пурнăç енчен илсен - пĕрремĕш вырăнта. Çынсене апатпа тăрантасси - пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсенчен пĕри мар-и вара? Апатланакансен хисепне шутласа пăхсан вара?***

Галина Васильевна Платонован ĕç пӳлĕмĕ питĕ пĕчĕккĕ. Урам енелле пĕртен-пĕр чӳрече. Сĕтел çинче вазăсенче чечексем тата хулăн кĕнеке-альбомсем: "Хăвна ху кондитер", "Асамлă чуста", "Килти кондитер". "Березка" столовăй заведующийĕн кашни ĕç кунĕ пĕр пек пуçланать. Накладнойсене, телефон шăнкăравĕсене, финанс расчечĕсене шутласа кăлараяс та çук. Ĕç питĕ нумай, вĕсене пĕрне те кая хăварма юрамасть. Вăл ертсе пыракан пĕчĕк коллектив ирхине ирех хăйĕн канăçсăр ĕçне тытăнать. Кунĕпе çĕр-çĕр çынна апатлантарас тесен мĕн чухлĕ çĕр улми шуратмалла, котлетсем тумалла, салатсем валли пурне те турамалла, плюшкăсемпе булкăсем мĕн чухлĕ пĕçермелле, чашăк-тирĕксем çумалла вĕт. Вĕсем вара пурне те пĕлсе, хăвăрт пурнăçлаççĕ, хăйсем кăмăлсăр пулнине вара нихçан та кăтартмаççĕ. Çак çăмăл мар ĕçе хĕрарăмран лайăхрах кам пурнăçлатăр-ха?

... Столовăй алăкне ирхине ирех, пĕрремĕшĕ пулса Наиля Мингазутдинова кондитер уçать.

Çутă çутать, крахмалласа хытарнă калпак тăхăнать те чустаран темтепĕр пĕçерме тытăнать. Çак ĕçе вăл чунчĕререн пурнăçлать. Чустаран çемçе те кăпăшка плюшкăсем, булкăсем пулччăр тесе тăрăшать. Çаплах вăл пĕçернĕ кукăльсемпе тăпăрчăран сочниксем, ашран тунă перемячсем тата ыттисем те унăн питĕ тутлă пулаççĕ. Апла пулин те купăста, аш, çĕрулми, кăмпа кукăлĕсене унран лайăхрах никам та пĕçермест пулĕ. Унăн вĕсем духовкăра хĕрелсе, кăпăшка пиçеççĕ.

... Аш цехĕнче Альфия Тухватуллина хуçаланать. Унăн ĕç хатĕрĕсем - пĕр электромясорубка, аша хурса касмалли хăмасемпе çĕçĕсем. Килти кăлпасси, гуляш, шашлык тата пĕчĕк пельменьсем тăвас тĕлĕшпе вăл кунта тĕп специалист тата ăстаçă шутланать. Столовăйра ĕçлекенсем мартăн 1-мĕшĕнче Альметьевск хулинче иртнĕ спартакиада илсе кайнă пеккисем. Ун чухне вĕсем унта 40 килограмм пельмень туса кайнă, лерен вара каялла пĕрне те илсе килмен.

... Гульсира Галимовапа Альфия Абдрахманова (кунта вăл 18 çул ĕçлет ĕнтĕ) поварсем вĕри кухньăри чи яваплă ĕçсене пурнăçлаççĕ: шӳрпе, рассольник пĕçермелле, лапшана яшкана ямалла, гарнирсене вăйсăр çунакан вут çине лартмалла, закускăсем хатĕрлемелле.



Кĕскен каласан, пурне те каласа та, асăнса та пĕтерес çук.

... Галина Яфанова кассир та ĕççĕр лармасть: клиентсенчен укçа илет, апат валеçекенсене те пулăшса ĕлкĕрет. Кунта пурте вăхăтпа хисеплешмесĕр вăй хураççĕ, ку санăн, ку манăн тивĕç тесе тăмаççĕ. Калаçма юратакан Галина 30 çул хушши çакăнта ĕçлесе пĕрре те ывăнман пекех туйăнать. Кунта кашни кун строительсен 9 бригади апатланать. Кусем вĕсем - Пушкăртстантан, Шупашкартан, Чаллăпуçĕнчен, Альметьевскран, Хусантан килнисем. Хулара пурăнакансемпе ялсенчен килнисем те кĕркелеççĕ. Çулла вара ачасен ушкăнне кунне виçĕ хутчен çитерне. Чăнах та, кунта чашăк-тирĕк çăвакан Энже Нуруллинапа Рузалия Шарафуллина техничка пурне те пулăшаççĕ. Çакăн пек ĕçре наянсем вăрах вăхăт хушши тытăнса тăраймаççĕ.

... "Березкăра" арçын та пур - Ахмет Хамматов экспедитор. Апат-çимĕçе вăхăтра илсе килет, тӳшкесене ваклать, йывăр михĕсем тиет, электричество юсавĕсем, столовăй хуçалăхĕнчи ытти вак-тĕвек ĕçсене пурнăçлать. "Мĕн ыйтнине пурне те тăвать", - тет Галина Васильевна.

Кунта вăл - тĕп командир унăн хĕр-пикисем - салтаксем пулсан, производство заведующийĕн Закия Мусинан званине ӳстермеллех. Вăл ăна тивĕçлĕ. Опычĕ те пысăк - 66-мĕш çултанпа ĕçлет. Питĕ тăрăшса, чун-чĕререн, ĕçе парăнса вăй хурать - кĕскен каласан, ăна яланах шанма пулать. Заявкăсем, апат-çимĕç йышăнать, вунăкунлăх отчечĕ тăвать. Хăй вара тирпейлĕ, таса, прическки те - халь кăна ăстаçă патĕнчен килнĕ пек.

Хăшĕ-пĕри çапла та калĕ - мĕн хитрелетсе çыраççĕ-ши - ăшă çĕрте ĕçлеççĕ вĕт тата яланах тутă. Ирхине 2-3 сехетре ĕçе килме вара çăмăл-им? Эрнекунсемпе шăматкунсенчи юбилейсем, тĕрлĕ паллă кунсем е 120 çынлăх туй сĕтелли хатĕрлемелле, çурçĕр иртсен пурне те пуçтармалла, савăт-сапа çумалла - çакă мĕнле? Ярмăрккапа акатуйсенче тата районти ытти уявсенче кану кунĕсемсĕр ĕçлемелле, хăвăн таварна тивĕçлипе кăтартмалла. Галина Васильевнапа Закия Исмагиловна хăйсен суту-илӳ ретне илемлетес тесе темĕн те шутласа кăлараççĕ. Иртнĕ кĕркуннехи уявра аэропорт хирĕнче чăн-чăн "пахча" композици туса хатĕрленĕччĕ - кăчăр-кăчăр купăста пуçĕсем, кабачоксем, арпуссем, кишĕр тата тулă пучахĕсем. Хăмпăсем, чечексем, илемлĕ тутăрсем...

Чăн-чăн художниксем. Ир-ирех хĕрсем кунта пысăк кастрюльсем, газ плитисемпе баллонсем илсе килсе вырнаçтарнă, пуян сĕтел хатĕрленĕ - килĕр, хăнасем, ырă сунса кĕтетпĕр. Вăл кун тата çил мĕнле сивĕччĕ... Вăт çапла. Эсир вара ăшă çĕрте тетĕр.

1997 çулта çак коллектив 2 миллиард та 45 миллион тенкĕлĕх продукци сутнă, çав шутра хăйĕнне - 1 миллиард та 758 миллионлăх. Мухтанма та пулать. Столовăя такам сутăн илесси çинчен калаçусем те пулчĕç. Мĕн курĕччĕ-ши "Березка" кун пек пулсан?

Эпир хăнăхнă хальхи вăхăтри суту-илӳ формисене йышăнатчĕ пулĕ. Унтан - супермаркет. Питĕ шел. Паянхи "Березка" пире ытларах килĕшет.

**Т.НАЗАРОВА.**

**Н. Азизов сăнӳкерчĕкĕнче: З.И.Мусина.**

# Ача-пӑча страници

## Шкул пурнӑҫӗнчен



### “Ботаникӑпа сывпуллашни”

Нумаях пулмасть пирӗн Хумаелӗнчи шкулта ҫакӑн пек ятпа каҫ иртрӗ. Уява йӗркелекен - биологи учительници Надия Асхатовна Насыбуллина “Смак”, "L - клуб", “Пӗрре курсах юратни”, "Аркадий Райкин патӗнче хӑнара", "Телейлӗ самант" пек кӑсӑк вӑййӑсене суйласа илнӗ.

Шкулта вӗренекенсем ҫак каҫ тӗлне тӗплӗн хатӗрленнӗ, ыйтусем ҫине хӑварт тата тӗрӗс хуравларӗҫ, ҫаплах улма-ҫырласене шӑршипе палӑртрӗҫ. "Телейлӗ самант" вӑййӑри киле панӑ заданире 47 ыйту ҫине хуравламаллаччӗ. Ӑна пурнӑҫлама ачасене Р.В.Абдуллинапа Г.Я.Фахриева учительсем пулӑшрӗҫ.

Кашни вӑййӑ хыҫҫӑн ҫӗнтерӳҫӗ-командӑна хаклӑ парнесем пачӗҫ. Кайран жюри пуҫтарӑннисене юлашки результатсемпе паллаштарчӗ (хальхинче жюри хӑйне евӗрлӗ пулчӗ, виҫӗ ушкӑна уйрӑлчӗ: оптимистсем, реалистсем тата пессимистсем). 10-11-мӗш классенче вӗренекенсенчен тӑракан “Вишня” команда ҫӗнтерчӗ. Ҫак хаваслӑ каҫ чей ӗҫнипе вӗҫленчӗ.

**Л.НАСЫБУЛЛИНА.**
**Хумаел шкулӗ.**

### Навруз уявӗ

Ҫӗнӗ Элметри шкулта Навруз уявне маларах - мартӑн 20-мӗшӗнче ирттерчӗҫ. Тутар чӗлхине вӗрентекен учительница Р.Р.Сайфуллина ертсе пынипе йӗркеленӗ ҫак мероприятире пурте пурччӗ - наци тумӗсем, чак-чак, тутарла юрӑсем юрларӗҫ, ташӑсем ташларӗҫ, Хаджа Насретдин шӳтлерӗ, пурне те савӑнтарчӗ, парнесем пачӗҫ. Ҫав кун пуҫламӑш классенче вӗренекен вырӑс ачисем тутарла сӑвӑсем каларӗҫ, тӗрлӗ вӑййӑсене хутшӑнчӗҫ. Навруз пики ҫав кун ачасене чылай савӑнӑҫ парнелерӗ. Ытти шкулсенче те ҫавӑн пек уявсем иртрӗҫ.

### Те шӳтлесе, те чӑнласах...

Унӑн вӗри куҫҫулӗ юхан шыв пек шӑнкӑртатса юхрӗ.

Ҫуркуннешӗн савӑнса кӑсӑясем кӳлленчӗкре шӑмпӑлтатса шыва кӗреҫҫӗ, ӑш хыпнипе унти хура шыва лӑнкӑрт-лӑнкӑрт ӗҫеҫҫӗ.

Пӗрре хыпса ҫунма пуҫланӑ чӗре татах та хытӑрах ҫунма пуҫларӗ. Унтан ҫунса пӗтсе кӗл пулчӗ те сӳнчӗ.

Хӗр тепӗр хут утиял ӑшне кӗрсе выртрӗ те тин курнӑ тӗлӗкне кино пек пӑхма пуҫларӗ.

Пирӗн Муркка кушак кашни кун шӑши тытса хӑй сывлӑхне упрать.

Илемлӗ эрешпе хупӑрланнӑ чӳречерен ҫутӑ урамалла яр уҫҫӑн ӳкет.



### Чуглайман йӗркесем (Ачасен ҫырӑвӗсенчен)

*Куҫӗсене тӳпенелле ҫӗклерӗ те хӗр - унта ҫутӑ ҫӑлтӑрсене курчӗ. Кӑштахран вӑл вӗсене каллех антарчӗ...*

*Каялла-малалла ҫаврӑнса кайрӗҫ хӗрсем хӑйсен килнелле.*

*Ҫил хытӑ вӗрнипе унӑн атти тинӗсе путнӑ.*

*Хӗрача куҫҫулӗ пӗтичченех йӗрсе тӑнӑ.*

*Мӗтри сак ҫине ларчӗ те ҫӗлӗкне пуҫӗпех хывса хучӗ.*

*Микулай хӑйне йывӑҫ ҫумне ҫыхса хучӗ те малалла таплаттарчӗ.*

*Пӗрре ҫеҫ тинкерсе пӑхрӗ Петӗр юлташӗ ҫине, лешӗ тӑватӑ кун апат ҫименни курӑнчӗ.*

---

### * *Кӑмпасем*



#### *ХУРА КӐРӐҪ*

Пытанма пӗлет вара,
Патакпа ӑна шыра,
Хуп-хура хӑйне кура,
Тӑварла - ҫиме юрать.

#### *КӐТРА КӐМПА*

Пӗркеленчӗк,
тӗркеленчӗк,
Пӳрнеске хумалӑх
енчӗк.
Чӑвашла - кӑтра кӑмпа,
Кӑтрашка-ҫке ҫавӑнпа.

#### *УПЛЮНККА*

Тунката ҫинче ӳсет,
Тупата, сивве тӳсет.
Туллӑ ҫав ӑшаласан,
Типӗтсен те пин аван.

### *Туптарусем*

**Ҫур ҫитессе хыпарлать,**
**Ырӑ тус пек пулӑшать:**
**Трактор плугӗ хыҫӗнче**
**Ӑман пухать хирсенче.**



**Шав! шавларӗ,**
**Шар! шарларӗ,**
**Ҫӗр питне шӑварчӗ,**
**Тасатса хӑварчӗ.**

**Ҫуркунне савӑнтарать,**
**Ҫур ҫитсен уҫӑлтарать,**
**Кӗркунне тӑрантарать,**
**Хӗл ҫитсессӗн ӑшӑтать.**



**Н.БЕЛОВА**
**пухнӑ.**

### ЮМАХ ҪЫРАТПӐР ХАМӐРАХ

### Ҫӗр пус пуличчен, ҫӗр тус пултӑр

Ашшӗпе амӑшӗн икӗ ача пулнӑ. Пӗр ачин сӗре пуян пулас килнӗ. Тепӗр ачин нумайрах ҫынпа туслашасси килнӗ. Пӗррехинче вӗсем тавлашса каяҫҫӗ. Пӗр ачи: “Ҫӗр тенкӗ укҫа пулсан, манран пуян ҫын та пулмӗ”, - тет. Тепӗр ачи калать: “Ҫӗр тус пулсан, манран пуянни те пулмӗ”. Вара вӗсенчен пӗри укҫа, тепри шанчӑклӑ юлташ шырама тухса каять. Нумай-и, сахал-и вӑхӑт иртнӗ - пӗри ҫӗр тенкӗ укҫапа, тепри ҫӗр юлташпа паллашса киле таврӑнаҫҫӗ. Иккӗшӗ те хӑйсене пӗр пекех пуян тесе шутлаҫҫӗ. Вӑхӑт иртнӗ хыҫҫӑн иккӗшӗн пурлӑхне те ҫаратса каяҫҫӗ. Ҫӗр тенкӗ укҫаллӑ ача нимсӗр тӑрса юлать. Ҫӗр юлташ тупнӑ ачи хӑйӗн тусӗсене нуши ҫинчен каласа парать. Вара ун патне кашни тусӗ япаласем илсе килсе парать. Ҫакӑн хыҫҫӑн ҫӗр тенкӗ укҫалли нимсӗрех юлать. Ҫӗр тусли пуянах юлать. Ҫавӑнпа ӗлӗкренех каланӑ: “Ҫӗр пус пуличчен, ҫӗр тус пултӑр”.

### Ӑслӑ хурсем

Ӗлӗк-авал пӗр ялта, тусем-сӑртсем хушшинче, пӗр карчӑкпа старик пурӑннӑ тет. Вӗсем питӗ чухӑн пурӑннӑ, ача-пӑча та пулман тет. Килкартинче пӗртен-пӗр хур кӑна ҫӳренӗ. Ҫак хура вӗсем юратса пӑхнӑ. Ҫуркунне ҫитсен, хур чӗпӗсем кӑларнӑ. Чӗпписем ӳссен, вӗсене тусем ҫине вӗҫтерсе илсе кайнӑ.

Ҫак хурӑн хӑйӗн хуҫисене питӗ пулӑшас килнӗ. Вара вӑл кашни кунах, тусем ҫинчен каялла май вӗҫсе килнӗ чухне, ҫӑварне пӗрер ылтӑн укҫа хыпса килнӗ (ту ҫинче никам та пӗлмен ылтӑн купи пулнӑ).

Карчӑкпа старик чунтан савӑннӑ, майӗпен хӑйсене кирлӗ япаласем туяннӑ. Часах вӗсем пуйса кайнӑ. Иртен-ҫӳрене те хӑналамасӑр яман. Халӗ те пулин карчӑкпа старик, хурсем питӗ килӗштерсе пурӑнаҫҫӗ тет.



**А.ФЕДОРОВ.**

### * *Пултарулӑх кӗтесӗ*

*Маншӑн ырӑ кашни кайӑк,*
*Улӑхри кашни чечек,*
*Маншӑн хаклӑ ҫутҫанталӑк*
*Хамӑн хаклӑ сывлӑх пек.*
*Тӳпере вӗҫет пур кайӑк,*
*Ҫӗр ҫинче ӳсет чечек...*
*Вӗсене упрар-ха лайӑх,*
*Кӳрер мар нихҫан инкек.*

***Таня ПИРОЖКОВА.***

#### Ҫуркунне

*Килсе ҫитрӗ ҫуркунне,*
*Хитреленчӗ ҫӗр-анне.*
*Хӗвел хытӑ хӗртнипе*
*Тӗксӗмленчӗ сӑрт-тӳпем.*

*Шыв юхать урамсемпе,*
*Янкӑрах кӑвак тӳпе.*
*Кураксем ав кӑнтӑртан*
*Вӗҫсе килнӗ чӑн малтан.*



***Людмила ЕГОРОВА.***

#### *И.Я.Яковлева*

*Тӑван атте пекех эс пултӑн,*
*Ӑсларӑн кӗнеке тем чул.*
*Малашлӑха яр уҫҫӑн куртӑн -*
*Кӑтартрӑн халӑха чӑн ҫул.*
*Чӑваш ялан пуҫне усатчӗ,*
*Хӑратчӗ мар-и ҫӗкленме?*
*“Шкулсем куллен кунах уҫасчӗ,*
*Пултарччӑр, - терӗн - вӗренме”.*
*Чӑваш, чӑваш! Вӗрен те савӑн.*
*Вула, шутла, шкула ҫӳре.*
*Тӑван тӗнчем, кӗҫех ак калӑн:*
*“Яковлева тав чӗререн...”*
*Патша тӳре-шари юнарӗ*
*Сана пӗлмесӗр намӑса.*
*Куну-ҫулу пӗр пек шумарӗ,*
*Ҫавах эс чунупа таса.*
*Пӗрех пуҫна усса тӑмарӑн,*
*Васкарӑн эс малашлӑха!*
*Куштан кулли пулма памарӑн*
*Ӗҫчен те ырӑ халӑха.*

***Таня ИВАНОВА.***

---

### Ха! хА! ха!



Вова шкултан таврӑнать, ашшӗ ӑна:

- Ну, ывӑлӑм, мӗнле паллӑсем-ха сан дневникунта кӑтарт-ха, - тет.

- Чарӑн-ха, атте. Чӑнчӑн ар ҫынсем вак-тӗвек япаласем ҫинчен калаҫмаҫҫӗ.

* * *

- Вова, сана мӗнле предмет ытларах килӗшет?

- Шӑнкӑрав.

* * *

- Вова, кун пек ятлаҫма ӑҫтан вӗрентӗн?

- Ятлаҫма вӗренмеҫҫӗ, вӑл Турӑ панӑ талант!

* * *

Мулкач вӑрманпа пырать. Пӗр уринче атӑ, теприн че ҫӑм атӑ.

- Мӗн, эсӗ ухмаха тухнӑ-и? - пӳрнипе тӑнлавне тӗллесе ыйтать Кашкӑр.

- Эсӗ радио итлемерӗн-и? - тавӑрать Мулкач. - Синоптиксем паян ҫумӑр ҫӑвать, вырӑн-вырӑнпа юрпа хутӑш терӗҫ.

* * *

- Анне, кам вӑл Карл Маркс?

- Мӗнле калас... ну, экономист.

- Пирӗн Соня аппа пек-и?

- Мӗн эсӗ, хӗрӗм. Соня аппу аслӑ экономист.

* * *

Коммерсант ывӑлӗнчен:

- Иккӗ ҫумне иккӗ хушсан миҫе пулать?

- Улттӑ, - хуравлать лешӗ.

- Тӗрӗс мар-ҫке, тӑваттӑ пулать.

- Пӗлетӗп, анчах манӑн питӗ хаклашас килет.

* * *

Пӗчӗк арҫын ача ашшӗ-амӑшпе туй курма пынӑ. Пурте савӑнаҫҫӗ.

- Санӑн туййӑнта хӑҫан ташлӑпӑр-ши? - вӑлтса ыйтаҫҫӗ ачаран.

- Эпӗ нихӑҫан та авланмӑп, - хуравлать лешӗ.

- Мӗншӗн?

- Эпӗ ахаль те тахҫантанпах авланнӑ ҫынсемпе пурӑнатӑп.

Улах юррисем

## Хура вăрман витĕр тухнă чухне

Сирĕн çире  пустав пит килĕшет,
Те аркине тикĕс каснăран.
Сирĕнпеле сăмах пит килĕшет,
Те кĕçĕнрен пĕрле ӳснĕрен.

Хуралту вăрманĕ, ай варринче
Çырла пиçет Питрав тĕлĕнче.
Ир те, каç та чупса, ай, пыраттăм
Çунакан чĕрене пусарма.

Ай-ай, пĕлĕт юхать, пĕлĕт юхать,
Пĕлĕт хушшисенчен çил вĕрет.
Икĕ куçăм вылять, тутам кулать,
Эс пĕлместĕн, тусăм, ăш çунать.

Хура вăрман витĕр тухнă чухне
Çиччĕн тухрĕç мана вĕлерме.
Шик! шăхăртăм - атте илтмерĕ,
Кăчăк туртрăм - анне сисмерĕ.
Авкалантăм хура çĕлен пек,
Макăртăм сăпкари ача пек.

Юханшывсем юхаç аналла,
Çилĕ хумхантарать тăвалла.
Турриех те çырать, ай,ырлăха,
Тăшман хурлантарать чунăма.

Пухса йĕркелекенĕ
**Е.ИЛЮШКИНА.**

## "Клубра сивĕ, кĕтессисенче эрешмен картисем"...

Пирĕн пата çыраççĕ

*"Хисеплĕ редакци, сирĕ патăра Çĕнĕ Амзяри çамрăксем çыраççĕ. Пирĕн клуб питĕ кивĕ: стена çинчи плакатсем бомба пăрахнă хыççăнхи пек, вырăнĕ-вырăнĕпе штукатурка ишĕлнĕ. Пирĕн клуб вара - виçĕ ялăн пĕртен-пĕр культура çурчĕ. Анвар Шайдуллин заведующи сăмахĕсем тăрăх, вăл пĕрре мар пулăшу ыйтнă, çапах усси çук.*

*Пирĕн кунта уяв кунĕсенче те ташлама, музыка итлеме май çук. Клуб заведующийĕ тахçанах пенсире, ăна çамрăксем интереслентермеççĕ те.*

*Ытти ялсенче пĕтĕм çĕрте тасалăх, юмахри пек чечексем ӳсеççĕ, пирĕн чӳрече янаххисенче вара эрешмен карти çеç.*

*ЯЛ ÇАМРĂКĔСЕМ".*

Çыру вĕçне алă пусман пулин те, эпир ун çине хуравлас терĕмĕр. Çак ĕçсем çинчен лайăхрах пĕлес тĕллевпе эпир район администрацийĕн культура пайĕн заведующине Р.Н.Яруллина çырупа паллаштартăмăр. Вăл çапла хуравларĕ:

"Çырури хыпар тĕрĕсех. Чылай ялти клубсем халĕ çакăн пек лару-тăрура. Вĕсенче сивĕ, хăтлă мар, ялсене газ кĕртеççĕ пулин те, укçа çуккипе ăна клубсемпе çыхăнтармаççĕ. Çапла, 10 клуба çеç газ кĕртнĕ. Культура çурчĕсене централизациленĕ майпа финансланипе вырăнти самоуправленин ял Совечĕсем вĕсене пулăшаймаççĕ, çакă ĕçе тата та кăткăслатрĕ. Клубсене юсама та нумай укçа-тенкĕ кирлĕ, вăл вара пирĕн çук. Клубсем валли магнитофонсем, телевизорсем туянма та йывăр. Çĕнĕ Амзяри клуба илсен, кунта клуб заведующине кăна айăпламалла мар. Çамрăксем хăйсем обществăлла япаласемпе тирпейсĕр усă кураççĕ".

**Эпир çакăн пек хурав илтрĕмĕр. Кĕскен каласан, ял çамрăкĕсен пушă вăхăтне усăллă йĕркелессипе çыхăннă ыйтусем халлĕхе малти вырăнта мар-ха.**


### Тавар илекенсем!

**Универмаг уйрăмĕсенче аслисемпе ачасем валли капрон курткăсем, кĕпе-йĕм, вырăн таврашĕ, резина атăсемпе калушсем, кĕпе-йĕм çăвакан машинасем, сĕтел-пукан, Ленинградра туса кăларнă чей тата столовăй сервизсем, бокалсем, турилккесем сутаççĕ.**

**Пирĕн пата килсе хăвăра кирлĕ тавар туянма сĕнетпĕр.**



**"АББ" ИК ЗАО "Татнефть" АО акцийĕсене хаклă хакпа туянать. 40-000-1-00323 номерлĕ лицензие 1997 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче панă. Çыхăну уйрăмне пымалла.**




Кил-çурт, хушма хуçалăх

## Лайăх пăхсан пĕри те вилмест

**Çулсерен инкубатор чĕпписем туянатпăр. Те чирлĕ чĕпсем лекеççĕ - çурри майлах вилсе пĕтет. Мĕнле пăхмалли пирки кĕскен каласа парсан аванччĕ.**

**Т.МАТВЕЕВА.**

Туяннă чух çивĕч, ури çинче çирĕп тăракан чĕпсене суйласа илме тăрăшăр. Сывă чĕпсен сăмси те, ура лапписем те сарă тĕслĕ. Пĕр талăкри чĕпсен чĕрĕ виçи вăтамран 36-38 грамм пулать.

Чĕпсем усракан пӳлĕмре ăшă çапларах пулмалла. 1-5 талăкрисемшĕн - 29-30 градус, 6-10 талăкрисемшĕн - 26-28 градус, 11-20 талăкрисемшĕн - 23-25 градус, 21-30 талăкрисемшĕн - 21-22 градус, 31-40 талăкрисемшĕн - 18-21 градус.

Температурăна пĕр пек тытма шыв ямалли грелкăпа усă курма пулать. Чĕпсем валли урасем çине вырнаçтарнă, çиелтен уçăлакан хупăллă, йывăç ещĕк илме пулать, унăн тĕпĕ пулмалла мар. Виçи çур метр сарлакăш, çӳлĕшĕ 45 сантиметр пулсан çитет. Ещĕкĕн шал енне фанерăпа е картонпа çапмалла. Ещĕкĕн пĕр енне 20 сантиметр çӳлĕш шăтăк тумалла, ун витĕр чĕпсем ăшăтмалли обогреватель патне тухса çӳреме пултарччăр.

Ещĕк ăшне 7-8 литр вĕри шыв кĕрекен савăт лартса çиелтен виткĕçпе витмелле, ун çине ăшă тытакан япала /пăчкă кĕрпи, пакля, çăм юлашкийĕсем тата ытти те/ тултарнă минтер хумалла. Ещĕк виткĕçне çирĕп хупламалла. Ăшă нумай вăхăт упрантăр тесе вĕри шыв янă савăт айне те аçам е кĕççе, е темиçе сий хут хумалла. Айккисенчен савăта типĕ улăмпа хупламалла.

Савăта вĕри шыв янă хыççăн 10 минутран ещĕкри сывлăш 30 градуса çити ăшăнать. Çакăн пек грелка ăшша 8 сехет хуши упрать. Çавăнпа та шыва талăкра виçĕ хутчен улăштарас пулать. Грелка тăракан пӳлĕмре вара 15 градусран кая мар ăшă пулмалла.

40 куна çитнĕ чĕпсене ăшăтмасан та юрать, пӳлĕмри сывлăш температури 16-18 градус пулсан çитет. Чĕпсем кун пек чух çивĕч пулаççĕ, вĕсен мамăкĕ тикĕс, яка, йăлтăркка пулать. Вĕсем апат лайăх çиеççĕ, хăвăрт ӳсеççĕ. Ăшă нормăран ытларах пулсан, чĕпсем йывăррăн сывлаççĕ, нумай шыв ĕçеççĕ, мамăкĕ те йăлтăртатмасть. Çавăн пек чĕпсем начар ӳсеççĕ, вар виттине ереççĕ, сывлăш çитменнипе аптраççĕ, вилме пултараççĕ.

Сывлăш ытла сивĕ чух чĕпсем пĕр çĕре пуçтарăса лараççĕ, хускаласшăн мар, шиплетеççĕ, вĕсен тĕкĕ шăртланса тăрать. Çакăн пек чĕпсем начар ӳсеççĕ.

Пӳлĕмре яланах уçă сывлăш çителĕклĕ пулмалла, анчах та пӳлĕме асăрханса, сивĕ сывлăш вăйлăн кĕрсе тăмалла мар туса уçăлтармалла.

Ăшă, хĕвеллĕ çантала́кра 3-4 талăкри чĕпсене сывлăш температури 15 градусран кая мар пулсан уçăлтарма кăларма юрать. Чĕпсем мĕн чухлĕ ытларах уçă сывлăшра пулаççĕ, çавăн чухлĕ хăвăртрах аталанаççĕ.




### Аксеновăн Бизнес Шкулĕн Хусанти филиалĕ

***DOS, Nopton, Windows 95, MS Office 97, Word, Excel, 1с бухгалтери компьютер курсне вĕренме йышăнать.***

***Компьютера лайăх пĕлме вĕрентме 10-14 çулхи ачасен ушкăнне пуçтарасси çинчен пĕлтерет.***

***Кăмăл пуррисене хăйсен ĕçĕсем, компьютер вăййисем тата ытти валли вăхăт уйăраççĕ. Ĕç вырăнне ПЭВМ Pentium 166 MMX, СДпа оборудованиленĕ.***

***А4 форматпа хура-шурă ксерокопи тумалли услугăсем паратпăр (пĕр строка 70 пус).***

***Сире эпир 10 сехетрен пуçласа 20 сехетчен кĕтетпĕр!***

***Адрес: Нурлат хули, Школьная урамĕ, "Йăла çурчĕ", 2-мĕш хут. Телефон: 5-37-51.***

* * *

### Аксеновăн Бизнес Шкулĕн Хусанти филиалĕ

***Бухгалтер-экономист, бизнес йĕркелекен ăстаçă специальноçсене вĕренме йышăнать.***

***Студентсене пĕлсе тăма - консультаци ыйтăвĕсемпе 10.00 сехетрен пуçласа 13.00 сехетчен пыма пулать. Адрес: Нурлат хули, Школьная урамĕ, "Йăла çурчĕ", 2-мĕш хут. Телефон: 5-37-51.***


## Пĕлтерӳсем

**"Строительствăна механизациленин управлени" акционер обществинче ĕçлеме экскаваторщиксем, КС 4361 кран крановщикĕсем кирлĕ. Вăтам ĕç укçи - 1400-1700 тенкĕ. Кашни уйăхра параççĕ. Складская урамĕнчи 7-мĕш çуртра е 5-39-47 номерлĕ телефонпа ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**"Нурлатгаз" ЭПУ çутçанталăк газĕпе усă курма договорсем туман абонентсене тӳленĕ квитанципе абонент кĕнекине илсе "Нурлатгаз" ЭПУа пымалли çинчен аса илтерет.**

**Администарци.**

* * *

**6х3 метрлă шпалсенчен тунă çĕнĕ сарай сутатпăр. Адрес: Заводская урамĕ, 23-21.**

* * *

**Çемье хваттер тара илет. Телефон: 5-17-99.**

* * *

**Ренат Салихович Мустафин ячĕпе панă 1-мĕш номерлĕ вăтам шкула пĕтерни çинчен калакан А сериллĕ, 660530 номерлĕ аттестата тĕрĕс мар тесе шутламалла.**

* * *

**1997 çулта туса кăларнă ВАЗ-21061 автомобиль сутатпăр. Адрес: Нефтяниксен урамĕ, 6-23.**

* * *

**ВАЗ-21011 сутатпăр. Телефон: 5-11-28.**

* * *

**Участоклă çурт, усă курнă шифоньер, çĕвĕ çĕлекен машина, телевизор, холодильник, сĕтел, диван, тимĕр кравать, палас сутатпăр, хаклă мар. Адрес: Тукай урамĕ, 41 е 58, телефон: 2-24-85.**

* * *

**ВАЗ - 2106 - 8 пин тенкĕ, 2106 кузовĕ - 8 пин тенкĕ, "Урал" мотоцикл - 4 пин тенкĕ сутатпăр. Адрес: "афган" поселокĕ, 93-2.**

* * *

**Димитров урамĕнче 17-мĕш çурт сутăнать. Телефонсем: 3-12-56, 2-14-10.**

* * *

**Инвалидсем валли кресло-кӳме сутăнать. Адрес: К.Маркс просцекчĕ, 1-14.**

* * *

**Çурт сутăнать. Красноармейская урамĕнчи 15-мĕш çуртра ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Улттăмĕш моделлĕ двигатель, çăраллă тимĕр алăк, тимĕр сетка, кĕпе-йĕм çăвакан çĕнĕ машина сутатпăр. Телефон: 5-16-06.**

* * *

**Япаласем сутакан пасара хирĕç Гиматдинов урамĕнчи 121-мĕш номерлĕ çурт сутăнать.**

* * *

**Пахчаçăсен "Оптовик" юлташлăхĕнче дача сутатпăр. Телефон: 5-23-91.**


**"Экспресс - Фото" фотосалон фототоварсен, компьютерсен тата оргтехникăн, компьютер вăййисен анлă ассортиментне сĕнет.**

**Услугăсем паратпăр:**

**- компьютерсене юсатпăр тата модернизацилетпĕр;**
**- копировальнăй аппаратсен картриджĕсене çĕнететпĕр;**
**- принтерсен лентисене сăрлатпăр;**
**- программăпа тивĕçтерессине йĕркелетпĕр;**
**- стандартсăр оборудовани вырнаçтаратпăр;**
**- компьютер сечĕсене монтажлатпăр.**

**Документсене валли васкавлă фото сĕнет: тĕрлĕ тĕслĕ тата хура-шурă, вăхăчĕ 2 минутран тытăнса 5 минутчен.**

**Формат - 2,5х3,5, 3,5х4,5**
**(Евростандарт, аналог 3х4 тата 4х6)**

**4 сăнӳкерчĕкĕн хакĕ: тĕрлĕ тĕслин - 16 тенкĕ, хура-шуррин - 12 тенкĕ.**

**Фотопленкăсене проявить тăватпăр тата сăнӳкерчĕксене пичетлетпĕр.**

**Проявить тунăшăн - 6 тенкĕ, сăнӳкерчĕксене пичетленĕшĕн (10х15) - 1 тенкĕ те 80 пус.**

**"Экспресс-Фотора" сутăн илнĕ пленкăсене тӳлевсĕр проявить тăватпăр.**

**Эпир кану кунĕсемсĕр 9.00 сехетрен пуçласа 18.00 сехетчен ĕçлетпĕр.**

**Апат вăхăчĕ 13.00 сехетрен тытăнса 14.00 сехетчен.**

**Адрес: Нурлат хули, Школьная урамĕ, Йăла çурçĕ, 2-мĕш хут, телефон: 5-37-51.**



Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 865.